Ноябрĕн 17-мĕшĕ – Участковăйсен кунĕ

Халăха çывăх пулмалла

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

«Участковăйăн универсал пулмалла. Акă Олега та ĕçĕнче спортпа çывăх пулни питĕ пулăшать. Участковăй вăл – юрист та, психолог та, водитель те, спортсмен та... Милици ĕçченĕсенчен халăха чи çывăх сотрудник-çке вăл», – тет милици майорĕ Александр Николаевич пĕтĕмлетсе.

Участковăйсен тĕп ĕçĕсенчен пĕри вăл – преступленисене асăрхаттарасси, вĕсене уçса парасси. Кăçалхи 10 уйăхра участковăйсем пурĕ тупса палăртнă 294 преступленирен 84-шне уçса панă. Ку кăтарту пĕлтĕрхи шайран хăпарнă – 28,7 процентпа танлашать (республикипе – 23,2 процент).

Йĕркене пăснă тĕслĕхсем Оринин (31), Мăн Сĕнтĕр (50), Ильинка (26), Катькас (45), Чуманкасси (16), Ярославка (21) ял тăрăхĕсенче уйрăмах нумайййине палăртаççĕ шалти ĕçсен пайĕнче.

Çемьесенче тухнă хирĕçӳсене чарма участковăйсене çак тапхăрта пурĕ 71 хутчен чĕннĕ. Йĕркене пăсакансенчен ытларахăшĕ малтан та преступлени туса палăрнăскерсем.

Участковăйсем хăйсен ĕçĕнче профилактика мелĕсемпе анлă усă курма тăрăшаççĕ. Çавăнпа та йĕркене пăсакансене административлă яваплăх пурри çинчен аса илтерсех тăма тивет вĕсен. 10 уйăхра – административлă протокол. Ытларахăшĕ – обществăлла вырăнсенче ӳсĕр çӳренĕшĕн, вак-тĕвек хулиганла ĕçсемшĕн, обществăлла вырăнта алкоголь продукцине ĕçнĕшĕн. Чăваш Республикин «Административлă право нормисене пăсни çинчен» саккунĕнче палăртнă статьясемпе те протокол пĕрре мар çырма тивнĕ участковăйсен. Çемьери хирĕçӳсем тата таврана тирпей-илем кĕртессипе йĕркене пăснă тĕслĕхсем сахал мар пулнă. Районти участковăйсен аллинче 4 машина пурри ĕçе оперативлăрах пурнăçлама май парать.

Паянхи кун тĕлне вара шалти ĕçсен пайĕн участковăй уполномоченнăйсен уйрăмĕнче пурĕ 13 сотрудник тăрăшать. Вĕсенчен пĕрремĕш çул ĕçлекенсем тăваттăн, 3-5 çул вăй хуракансен иккĕн, 5-10 çул ĕçлекенсем çиччĕн. Сакăр сотрудник аслă пĕлӳ илнĕ, вĕсенчен пиллĕкĕшĕн – аслă юридици пĕлĕвĕ. Ыттисем хальлĕхе ятарлă вăтам юридици пĕлĕвĕ илнĕ. Ĕçĕ йывăр. Чăн-чăн арçын ĕçĕ темелле. Ялсенчи лăпкăлăха сыхлакансен штачĕ вара тулли мар, икĕ çын çитмест-ха. Анчах та таçти Мускав стройкисенче ĕçленинчен тăван вырăнсенче ĕçлени тем тесен те тăнăçлăха, çемье çирĕплĕхĕпе малта тăрать. Апла пулсан аслă юридици пĕлĕвне илнĕ çамрăксен шутласа пăхмалли çук мар. Уйрăмах спортпа çывăххисен тата водитель правине алла илнисен.

Н. НИКОЛАЕВА.

Халăх пĕрлĕхĕн кунне халалласа

Хаваслăн паллă турăмăр

Палăртнă вăхăта Москакассинчи Культура çуртне халăх йышлă пухăнчĕ. Халăх пĕрлĕхĕн кунне халалласа Москакасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ М.М. Пушкин сăмах каларĕ. Кунпа пĕрлех вăл 2009 çулхи итогсемпе паллаштарчĕ, умри задачăсем çинче чарăнса тăчĕ.

Хыççăн пысăк уяв концертĕ пулчĕ. Пухăннисем умĕнче эстрада юрăçи, «Тăртăри» фестиваль дипломанчĕ Катя Голубева, пулас çăлтăр, республикăри «Мехел» конкурса хутшăннă, Пĕтĕм Раççейри «Ылтăн кĕркунне» конкурс дипломанчĕ Даша Макарова юрăсем шăрантарчĕç. Кунпа пĕрлех республикăри «Хрусталь пушмак» тата «Ташша яра пар» конкурссен призерĕ, Пĕтĕм Раççейри «Ылтăн кĕркунне» конкурсăн иккĕмĕш степень лауреачĕ – Ирина Петрова ертсе пыракан «Калинка» тĕслĕх ташă ушкăнĕ – илемлĕ ташăсем парнелерĕ.

Г. ГОЛУБЕВА,
Москакассинчи Культура çурчĕн ертӳçи.

Сăн ӳкерчĕкре: сцена çинче – Катя Голубева.

Пенси ыйтăвĕсемпе

Пенси çумне хушса тӳлеççĕ

Эпир илтнĕ тăрăх, çитес çултан тытăнса пĕчĕк пенси илекенсене пурăнма кирлĕ минимум таран хушса тӳлеме тытăнаççĕ. Ун пирки тĕплĕнрех каласа пама май çук-ши?

Е. тата В. СТЕПАНОВСЕМ.

Пенси реформине çĕнетсе пынă май, 2009 çулхи июлĕн 24-мĕшĕнче 213-ФЗ номерлĕ Федераллă Саккун йышăннă. Асăннă саккун 1999 çулхи июлĕн 17-мĕшĕнче йышăннă 178-ФЗ «Патшалăх социаллă пулăшăвĕ çинчен» Федераллă Саккуна та улшăнусем кĕртрĕ. Ку саккунăн 12.1 статйипе килĕшӳллĕн 2010 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ĕçлемен пенсионерсене пурне те, вĕсен пенси виçи региона палăртнă пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк минимумран сахалрах пулсан, пенси çумне социаллă пулăшу шучĕпе хушса тӳлеççĕ. Ку социаллă тӳлеве РФ субъекчĕсенче пурăнма кирлĕ минимумран кая пенси илсе тăракан ĕçлемен пур пенсионерсене те тӳлеме тивĕç.

Пенси çумне паракан социаллă хушма тӳлев вăл – пенсионерăн укçа тӳлевĕсемпе социаллă пулăшу мерисен уйрăм енĕсене шута илнĕ май пенсионера хушса тӳлени. Ăна палăртнă чухне пур йышши пенси тĕсĕсене, федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансене тивĕçекен укçа суммисене, граждансен уйрăм категорийĕсене пурлăх тĕлĕшĕнчен пулăшмалли регионсенче палăртнă мерăсене те шута илеççĕ. Пĕр хут паракан социаллă пулăшу мелĕсене кăна шута илмеççĕ. Социаллă хушма тӳлевпе РФ Пенси фончĕ федераллă бюджет шучĕпе тивĕçтерет. Анчах та пенси виçипе хушма тӳлев пĕрле Раççей Федерацийĕнчи субъектри пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк минимумран ытла пулаймаççĕ. Пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк минимум виçине Раççей Федерацийĕн субъекчĕсенче социаллă хушма тӳлев парас тĕллевпе кашни çулталăк валли Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен законодательство акчĕсенче палăртаççĕ, ун пирки РФ Пенси фондне пĕлтереççĕ. Сăмахран, 2010 çулхи иккĕмĕш квартал валли Чăваш Республикинче пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк минимум виçине пĕр çын пуçне 3910 тенкĕ тесе палăртнă. Раççейĕпе вăл 4780 тенкĕпе танлашать.

2010 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса федераллă социаллă хушма тӳлев илсе тăма тытăнас тесен гражданинăн справкăсемпе документсем пухма кирлĕ мар. Кунпа çыхăннă ĕçсене 2009 çулта ĕçлемен пенсионерсем тĕлĕшпе пĕтĕмпех Пенси фончĕн районти управленийĕ социаллă пулăшу органĕпе пĕрле туса ирттерет.

Социаллă хушма тӳлеве 2010 çулхи январĕн 1-мĕшĕ хыççăн палăртас текен пенсионерсен заявлени çырмалла. Пенсионер ку ыйтупа Пенси фончĕн управленине 2010 çулта пынă пулсан, федераллă социаллă хушма тӳлеве 2010 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса тӳлеççĕ, анчах та çакна илме право пулнă хыççăн кăна.

Федераллă социаллă хушма тӳлев илес текен гражданинăн заявленипе пĕрле çак документсем кирлĕ пулаççĕ:

– çын кам пулнине, ăçта пурăннине, гражданлăха çирĕплетекен документ (паспорт);

– обязательнăй пенси страхованийĕн страховани свидетельстви;

– пенсипе ытти тӳлевсен виçи пирки силовой ведомство органĕ панă справка (РФ Оборона министерстви, МВД, ФСБ т. ыт. те урлă пенси илсе тăракан пенсионерсем). Мĕнле документсем тăратмалли пирки РФ Пенси фончĕн районти управленийĕнче те пĕлме пулать.

Инвалид ачасене, 18 çул тултарман ачасене, вĕсене çемьере тăрантаракан пулманнипе пенси пама пăхнă пулсан, вĕсене çӳлте асăннă хушма тӳлеве заявлени çырмасăрах пама тытăнаççĕ, анчах та 2010 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен маларах мар.

Пенси çумне социаллă хушма тӳлеве çак тĕслĕхсенче параççĕ:

– пенсионерăн пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк минимумĕ улшăннă чухне;

– хушма укçа тӳлевĕн виçине индексациленĕ чухне;

– социаллă пулăшăвăн тата укçан паракан компенсацисен эквиваленчĕсем улшăннă чухне.

Федераллă социаллă хушма тӳлеве ĕçлемен пенсионерсене кăна панă май, пенсионер ĕçе вырнаçать пулсан, унăн пĕр тăхтаса тăмасăр çавăн пирки Пенси фончĕн районти управлениие пĕлтермелле.

Е. АЛЕКСАНДРОВА,
РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕ.

Пурне те савăнăç кӳчĕç

Раççейри Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ ячĕпе саламлама Каршлăхри интернат çуртне Ильинка ял тăрăхĕнчи Вăрманкассинчи Культура çуртне çумĕнчи «Тăван Атăл» пултарулăх ушкăнĕ килсе çитрĕ. Хаваспах кĕтсе илчĕç вĕсене ватăсем.

– Пĕрле чухне, пĕр-пĕрне ăнлансан çеç йывăр вăхăтсене ирттерме пулать, - терĕ Культура çурчĕн директорĕ Эльвира Бронина. Пурне те çак уяв ячĕпе саламларĕ, ватăсене çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, телей сунчĕ.

Интернат çурчĕн директорĕ Г.Г. Мерлова артистсене асăнмалăх Илпек Микулайăн «Хура çăкăр» кĕнекине парнелерĕ, çакă ватăсенчен асăнмалăх парне тесе пĕлтерчĕ.

Эпир вара «Тăван Атăл» пултарулăх ушкăнне малашне те çитĕнӳсем сунатпăр, хăйсен хитре юррисемпе нумай çынсене савăнтарччăр вĕсем.

В. КРЮЧКОВА, культорг.

Сăн ӳкерчĕкре: концерт хыççăн пурте пĕрле.

Çĕр ĕçченĕсен кунĕ ячĕпе

Вулакансен конкурсĕ

Çĕр ĕçченĕсен кунне халалласа Муркашри ача-пăча библиотекинче ноябрĕн 10-мĕшĕнче ачасемпе çул çитмен çамрăксем хушшинче вулакансен республикăри конкурсĕн 1-мĕш турĕ иртнĕ. Унта районти шкулсенчи 60 ытла вĕренекен хутшăннă. Конкурс условийĕсемпе килĕшӳллĕн ачасен тăван çĕре юратни, ял хуçалăх ĕçченĕсен ĕç паттăрлăхĕпе ĕçри çиттĕнĕвĕсем, çĕр ĕçченĕсен династийĕсене хисеплесси пирки сăвăсем каламалла пулнă. Вĕсем вырăс тата чăваш поэчĕсен хайлавĕсене вуласа панă. Шурча шкулĕнче вĕренекен Анжелика Кудряшова хăй çырнă сăвă йĕркисене шăрантарнă. Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче вĕренекенсем «Çĕр ĕçченĕн ĕçĕ хисепе тивĕç» литература композицине кăтартнă.

Э.П. Димитриева, Л.С. Игнатьева, С.Г. Попова, Т.В. Шурнеева жюри членĕсем пултаруллисене палăртнă. 7–8 çулхисем хушшинче 1-мĕш вырăна Турай шкулĕнче 3-мĕш класра вĕренекен Мария Петрова, 9–11 çулхисем хушшинче Çатракасси шкулĕнче 4-мĕш класра вĕренекен Надежда Тихонова, 12–14 çулхисем хушшинче Муркаш шкулĕнче 8 «а» класра вĕренекен Анастасия Попова тухма пултарнă.

Çĕнтерӳçĕсем конкурсăн финал турне хутшăнаççĕ. Вăл кăçалхи ноябрĕн 27-мĕшĕнче республикăри ачасемпе çамрăксен библиотекинче иртет.

М. СКВОРЦОВА,
Муркашри ача-пăча библиотекин методисчĕ.

Сăн ӳкерчĕкре: конкурс вăхăтĕнче.

Воспитани ыйтăвĕсемпе

Тĕрĕс çулпах утасчĕ

«Комендант сехечĕ» текен саккун Чăваш Енре те утă уйăхĕнче вăя кĕчĕ. Унпа килĕшӳллĕн 18 çул тултарман ачасен ашшĕ-амăшĕсĕр каçхи 10 сехет хыççăн (çулла 11 сехет хыççăн) обществăлла вырăнсенче пулма юрамасть. Çул çитменнисене асăннă вăхăт хыççăн клубра дискотекăра асăрхасан, заведени хуçине те штраф тӳлеттерĕç.

Шкул ачисене пурне те «Комендант сехечĕ» текен саккунпа паллаштарнă ĕнтĕ. Анчах та хăшĕсем çак саккуна пăхăнасшăн мар-ха. Çитменнине хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕн хăлхине те кĕмен пулас çак хыпар.

«Комендант сехетне» вăя кĕртни – вăхăтлăх йышăну. Никамшăн та вăрттăнлăх мар, юлашки вăхăтра çул çитмен çамрăксем преступлени тăвасси ӳссех пырать. Каç сĕмĕнче ачасем хăйсене ирĕклĕ тытаççĕ, эрех ĕçнине те, пирус туртнине те ашшĕ-амăшĕ курмасть. Ачисем урамран кĕнĕ çĕре вĕсем çывăраççĕ. Çавăнпа та вĕрентекенсем асăрхаттарса каласнă чухне ашшĕ-амăшĕ хăйĕн ачине хӳтĕлеме хăтланать, вĕсен ачи эрех-сăрапа туслашнине ĕненмест. Ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕсене пырсан та, шăмат кунсенче пĕрлехи рейдсене тухма ыйтсан, вĕсем килĕшмеççĕ. Ачасем çакăнпа вара усă курма пикенеççĕ. Пĕчĕккĕн вăрлама пуçласси те çакăнтанах пуçланать. Мĕншĕн тесен пур чухне те эрех-сăрапа пирус валли укçа ыйтса илме çук.

Хăш чухне вара йăнăш çул çине пăрăнма килтех вĕрентнине те курма пулать. «Вĕсем пуян пурăнаççĕ, вĕсенне вăрламалла»,– тесе ачана пĕчĕклех вĕрентни пирки пĕр хăрăм йышăнни те пулнăччĕ. Халĕ вара ачи çине-çинех вăрлама пуçларĕ. Малтанхи преступлени тунăшăн вăхăчĕ тухиччен теприне тума ĕлкĕрет.

Çакăн пек тĕслĕх пĕрре кăна пулсан тем пекехчĕ-ха. Анчах вĕсен шучĕ палăрмаллах ӳссе пыни шухăшлаттарать. Мĕнле сăмахпа, ĕçпе тата тĕслĕхпе витермелле-ши ачасене тĕрĕс çул çинчен пăрăнса ан кайччăр тесен. Вĕрентекенсем тăрăшаççĕ-ха, ачасем патне килĕрен те çӳреççĕ, ашшĕ-амăшĕсене чĕнсе те калаçаççĕ. Анчах та усси курăнсах каймасть. Шкул çулне çитмен ачасемпе ĕçлекен инспекторсем те шкулсене пырса каласусем ирттереççĕ, айăпа кĕнĕ çул çитмен ачасене мĕн кĕтни пирки ăнлантарса параççĕ.

Ашшĕ-амăшĕсем хăйсен ачисем мĕнпе кăсăкланнипе интересленсех тăрсан, ачасене ытлашши ирĕке ямасан, пулнă ăпаласене курмăш тумасан, вĕрентекенсемпе пĕрле ăнланса ĕçлесе пырсан, «Комендант сехечĕ» тен кирлех те пулмĕ. Мĕн шутлать-ши ашшĕ-амăшĕ çакăн пирки? Ашшĕ-амăшĕн ятне епле пулсан та ярас марччĕ.

Р. СЕМЕНОВА,
Нискассинчи вăтам шкул директорĕн çумĕ.

Сăвă йĕркисем

Савни пуртан

Хĕвел пуртан ăшăмра та ăшă,
Çиçес килет телейлĕн ялкăшса.
Чĕремĕмре –хаваслă сăвă-ташă,
Кашни ăмсанĕ манăн яшлăха.

...Пуртан хĕвел, çӳрет çӳлте çут уйăх,
Вăтанчăклăн пăхать, сапать майпен
чĕр туртăм.
Пуртан çут уйăх, юмахри пек çу каçĕ.
Чĕрченкĕ туйăмсем хупласççĕ кăкăра.

Тăнлас килет пур сас-чĕве пĕр касă,
Вĕçес килет асамлă шăплăхра.
...Пуртан çут уйăх, ав, урама хĕр тухрĕ,
Инçе-инçе хитре юррийĕ юхрĕ.

Сар хĕр пуртан, тĕнче тем пек илемлĕ!
Савас килет тасан чăн кăмăлпа.
Ялтăртатса пăхаççĕ пит хĕлхемлĕ
Куçăмăмсем хаваслă кулăпа.

...Пуртан сар хĕр, лăпкăлăха çухатрăм,
«Савни» тесе чĕнме ăна хăяймарăм.
Савни пуртан эп пур паян, ялан...
Çунать пушаррăн юрату хытах.

Пулас килет ман хамăн ылтăнран,
Сапасчĕ таврана вут-хĕм татах, татах.
...Пуртан савни, телейĕм вĕçсĕр ман,
Хăватлă эпĕ. Вăйлă такамран.
Тата...Эп – аслă пурнăçран!

В. КОНСТАНТИНОВ.